Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

9 (7649) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи февралĕн (нарăс) 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

«Вĕрентӳ» нацпроекта пурнăçа кĕртсе

Ачасен пуласлăхĕшĕн

Шăкăл-шăкăл калаçаççĕ шкул пурнăçĕпе тата хăйсен вĕренекенĕсен пурнăç çулĕпе интересленсен Ю. Герасимов ертсе пыракан Турайĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулти вĕрентекенсем. Акă иртнĕ вĕренӳ çулĕнче кунта 30 ача шкулпа сыв пуллашнă. Тивĕçлĕ пĕлӳ илнĕскерсенчен 12 яшпа хĕр паян аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренĕве малалла тăсать. Вĕсенчен А. Сорокановпа А. Викторов аслă çар училищисенче пĕлӳ пухаççĕ: пĕрремĕшĕ – Мускавра, иккĕмĕшĕ – Чул хулара. Паян шкулта вĕренекенсенчен иккĕшĕ 1-2 чĕрĕк пĕтĕмлетĕвĕсемпе район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендийĕсене илсе тăни, 4-мĕш класра вĕренекен А. Салтыкова Çĕнĕ çул тĕлĕнче Президент елкинче пулни те – ачасемпе вĕрентекенсен пĕрлехи ӳсĕмĕ. Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан (сулахайран сылтăмалла) Зинаида Петровна Григорьева (35 çул ачасене математика вĕрентет), чĕрĕк ĕмĕр кĕвĕ-çемĕ вĕрентекен Калерия Ивановна Албутова, 35 çул ачасене вырăс чĕлхипе литературине юратма пулăшакан Эльвира Николаевна Иванова тата вырăс чĕлхипе литературин учительницинче 18 çул ĕçлекен Светлана Эдуардовна Хрисанова ачасене уроксенче тарăн пĕлӳ парассипе çĕнĕ технологисемпе те анлă усă курăççĕ.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Тĕнчери финанспа экономика кризисĕ

Татса памалли ыйтусем çук мар

Тĕнчери экономика кризисĕ пирки пĕлместпĕр мар ĕнтĕ. Районăн экономикăпа социаллă аталанăвĕ çинче те вăл палăрать. Нумайăшĕ ăна хăйĕн çинче туйма та ĕлкĕрчĕ. Çавăнпа та кризис кăларса тăратакан пулăмсем тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене оперативлă йышăнма, ку е вăл ыйтăва кая хăвармасăр татса пама тивет. Бюджет укçитенкипе те тĕллевлĕ те эффективлă усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Район экономикин тĕрлĕ сферисенче вăй хуракансен кризис тапхăрĕнчи ĕçне-хĕлне йĕркелесе пыма, кризиспа кĕрешме районта ятарлă комисси йĕркеленĕ. Иртнĕ тунти кун унăн пĕрремĕш ларăвĕ иртнĕ. Ларăва комисси председателĕ, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пынă.

Юрий Александрович районти лару-тăрупа паллаштарнинчен çакă курăнать. Унченхипе танлаштарсан, районти тĕрлĕ шайри бюджетсене налук куçасси чакса пырать. Çавна май ĕçсĕр тăрса юлакан социаллă хӳтлĕхе тивĕç çынсене пулăшма районта тĕллевлĕ программа йышăннă.

Ĕç рынокĕнчи хальхи лару-тăру пирки районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Т.А. Антонова пĕлтернĕ. Ĕçсĕр тăрса юлнисен шучĕ ӳссе пырасси палăрать. Çавна май ял хуçалăх предприятийĕсенче çынсене вăхăтлăх ĕç тупса парассипе ытларах тимлемелле. Ку енĕпе ертӳçĕсем хушшинче ăнлантару ĕçне те анлăрах туса пымалла. Ĕçсĕр çынсене тавралăха тирпей-илем кĕртес ĕçе явăçтарни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

П.Т. Терентьев предприниматель хуçасăр юлнă çуртсене хута яни ĕçсĕррисене ĕç тупса парассипе пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртнă. Продукци ытларах туса кăларасси тĕп вырăнта пулмалла.

Район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Р.И. Ананьева пĕлтернĕ тăрăх, район бюджетне кăçал 2 миллион та 50 пин тенкĕ, иртнĕ çул 3,5 миллион тенкĕ укçа-тенкĕ куçнă. Республикипе вара бюджета укçа хывасси 2 миллиард та 738 миллион тенкĕ чухлĕ чакнă.

Лару пысăк пĕлтерĕшлĕ ытти ыйтусене те сӳтсе явнă. Кусем вĕсем вĕрентӳ, сывлăха сыхлас ĕç системинче ĕçлекенсен ĕç укçи калăпăшĕ çинчен, тивĕçлĕ ĕç укçи тӳлемен предприятисен ертӳçисем çинчен т. ыт.те.

ХАМĂР ИНФ.

Бюджет

Укçа-тенкĕне перекетлĕрех тытма тивет

Финанспа экономика кризисĕ вырăнсене те çитме пуçларĕ. Акă районăн 2009 çулхи бюджетне иртнĕ çул вĕçĕнче çеç йышăнчĕç. Иртнĕ кĕçнерни кунхи лару-тăра вара депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем кăçалхи бюджета улшăнусем кĕртрĕç.

Район бюджетне тупăшсем енĕпе пĕтĕмĕшле 12627,4 пин тенкĕлĕх чакарчĕç. Уйрăм çынсем тупăшран тӳлекен налук виçи 13797,4 пин тенкĕ чухлĕ пĕчĕкленнипе çыхăннă çакă. Республика бюджетĕнчен каялла тавăрса памалла мар куçару тата 1170,0 пин тенкĕ чухлĕ ӳсмелле.

Тупăшсем 12627,4 пин тенкĕлĕх чакнăран бюджетри расхутсене те çавăн чухлех чакарчĕç депутатсем. Çав шутра вĕрентӳ сфери 5325,0 пин тенкĕлĕх чакрĕ. Сывлăха сыхлас ĕç тата спорт расхучĕсене 3320,0 пин тенкĕлĕх пĕчĕклетрĕç. Наци экономики текен статьяна 3365,0 пин тенкĕлĕх чакарчĕç. Сăмах капиталлă строительство пирки пырать. Пĕтĕмĕшле патшалăх ыйтăвĕсем текен статьяна 1253,8 пин тенкĕлĕх пĕчĕклетрĕç. Сăмах вырăнти самоуправлени органĕсене тытса тăма каякан укçа-тенкĕ пирки.

Районти финанс пайĕн ертӳçи Р.И. Ананьева палăртнă тăрăх, пирĕн расхутсем тупăшсенчен ытларах пулма пултараймаççĕ. Уйрăмах паянхи лару-тăрура укçа-тенкĕне тирпейлĕ тытмалла. Кун пирки бюджет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен манас марччĕ.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов тăкаксене чакарасси пирки çапла пĕлтерчĕ:

– Эпир коллективра кризиспа кĕрешмелли ĕçсен планне туса хатĕрлерĕмĕр. Районĕпе тăкаксене пĕчĕклетме пирĕн 19 койка-вырăн чакарма тивет. 1,5 ставкăпа ĕçлекенсене 1 ставка çине куçаратпăр. Кашни çыннăн ытларах ĕçлемелле пулать малашне. Коммуналлă тăкаксене те çирĕп тĕрĕслесе тăрăпăр. Пĕтĕмпе вĕсене 3 - 4 процент чухлĕ пĕчĕклетме палăртрăмăр. Киввисем вырăнне перекетлĕ ĕçлекен çĕнĕ хурансем илсе лартатпăр. Телефонсемшĕн каласнине кура тӳлемелли йĕрке çине куçатпăр. Сахал каласса ĕç тума вĕренмелле пирĕн. Тĕрлĕ услугăсемшĕн ĕçне тунă хыççăн тата унăн виçине кура çеç укçа куçарса паратпăр. Унченхи пек договора кура маларах укçа куçарасси пулмĕ. Санитари автотранспортне газ çине куçаратпăр.

Нумай ĕçе хамăр вăйпа тума хăнăхса пыратпăр. Акă 100 кубла метрлăх вăрман илсе йывăç касрăмăр. Халĕ хăма çуратпăр. Больница ĕçченĕсен вăйĕпе тăватпăр çакна. Строительство материалĕ пире сахал мар кирлĕ.

ОМС урлă укçа-тенкĕ ĕçлесе илесси çине те тимлĕ пăхма тивет.

Урăхла çул çук. Укçа-тенкĕне перекетлĕрех тытмалла. Ăна пурринчен ытла тăкаклаймăпăр.

А. ИВАНОВ.

Республикăра

Пурăнма кирлĕ минимум 2,2 процент ӳснĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче социаллă пĕлтерĕшлĕ ыйтусене сӳтсе явнă. Вĕсенчен пĕри – Чăваш Республикинчи пурăнма кирлĕ минимумăн чи пĕчĕк виçи çинчен.

Çавна палăртнă. Пурăнма кирлĕ минимум шайĕ кашни çын пуçне вăтамран 2008 çулхи 4-мĕш кварталта çав çулхи 3-мĕш кварталтипе танлаштарсан 2,2 процент (84 тенкĕ чухлĕ) ӳснĕ, 3981 тенкĕпе танлашнă.

Ял çыннисен социаллă демографи ушкăнĕсем тăрăх пурăнма кирлĕ минимум виçи 2008 çулхи 4-мĕш кварталта ĕçлекен çынсен 4295 тенкĕ пулнă (2 процент ӳснĕ), пенсионерсен 3145 тенкĕпе (2,5 процент ӳснĕ), ачасен 3859 тенкĕпе (2,5 процент ӳснĕ) танлашнă.

Пурăнма кирлĕ минимум шайĕ Атăлçи федераллă округĕн пур субъекчĕсенче те ӳснĕ. Ытларах вăл Чулхула облаçĕнче (122 тенкĕ), Çармăс Республикинче (121 тенкĕ), Мăкшă Республикинче (111 тенкĕ) хăпарнă.

2008 çула пĕтĕмлететпĕр

Промышленность

Паянхи номертен пуçласа эпир сире районăн иртнĕ çулхи ĕç пĕтĕмлетĕвĕсемпе кĕскен паллаштарма пуçлатпăр. Район çыннисем, предприятисемпе организацисем иртнĕ çул мĕн туни кăçалхи ӳсĕмсен никĕсĕ пуласса çирĕп шанатпăр.

Иртнĕ çул районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕшĕн ăнăçлă пулчĕ. Экономика ӳсĕмĕ бюджета тата районта пурăнакансен тупăшне пуянлатма пулăшрĕ. 12 уйăхра тĕп капитал çумне пынă инвестици хушăмĕ 118 процентпа танлашнă. Промышленноçра ку кăтарту – 132 процент.

Промышленность предприятийĕсем хальхи хаксемпе 1095,9 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă. Промышленность ӳсĕмĕн тĕп тӳпи «Сеспель» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра. Кунта производство унченхи çулхинчен 1,25 хут ӳснĕ. Асăннă предприятин районти промышленность производствин тӳпинчи виçи 63 процент. «Муркашри сĕт завочĕн» çулталăк хушшинчи ӳсĕмĕ 78 процент, «Муркашри кирпĕч завочĕн» – 67 процент, «Моргаушимежрайгаз» филиалăн – 34 процент, «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн – 30 процент.

Юлашки вăхăтра асăннă кашни предприятирех ыттисемпе пĕрле экономика кризисĕпе кĕрешмелли плансем хатĕрлерĕç.

Промышленность тата пăхса тăракан предприятисенчи ĕç производствине анализ тусан, ĕç тухăçлăхĕ пĕтĕмпе 28 процент ӳсни курăнать.

«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене февраль уйăхĕнче йышăнмалли график

Хăш кун	Вăхăчĕ	Кам йышăнать
Февралĕн 5-мĕшĕ	10–14 сех.	А.Н. ИВАНОВ, политканаш секретарĕ, РФ Патшалăх Думин депутачĕн Н.М. Бударинăн пулăшаканĕ
Февралĕн 10-мĕшĕ	10–14 сех.	В.Г. ДАНИЛОВ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, политканаш членĕ
Февралĕн 12-мĕшĕ	10–14 сех.	Н.П. ПЕТРОВА, политканаш секретарĕн çумĕ, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ
Февралĕн 17-мĕшĕ	10–14 сех.	А.Е. АНДРЕЕВА, политканаш членĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ
Февралĕн 19-мĕшĕ	10–14 сех.	В.А. МОРОЗОВ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ
Февралĕн 24-мĕшĕ	10–14 сех.	А.Ф. КОРНЕЕВА, ĕçтăвком ертӳçи, политканаш членĕ
Февралĕн 26-мĕшĕ	10–14 сех.	В.И. ВЯЗОВ, политканаш членĕ, «Росгосстрах-Поволжье» Чăваш Республикинчи управленийĕн Муркаш районĕнчи страхлакан пайĕн пуçлăхĕ

Культура

Ваçкассинче – база Культура çурчĕ

Январĕн 30-мĕшĕнче Муркаш районĕнче иккĕмĕш модернизациленĕ Культура çуртне уçнине савăнăçлă лару-тăрура паллă турĕç. Ваçкасси ялĕнчи Культура çурчĕ база Культура çурчĕ пулса тăчĕ.

Уява ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикипе архив ĕçĕн министрĕн çумĕ Т. Казакова, Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А. Андреева, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И. Николаев тата Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В. Егоров хутшăнчĕç.

Ваçкассинчи Культура çуртĕнче 250 çын вырнаçмалăх зал, артистсен, костюмсем хумалли тата ытти тĕрлĕ пӳлĕмсем те пур. Татьяна Казакова çак Культура çуртне çĕнĕ çутă, сасă, видео, компьютер оборудованийĕсемпе тата костюмсемпе тивĕçтерни çинчен свидетельство пачĕ. Кунти «Талан» фольклорпа эстрада ансамблĕн (ертӳçи Е. Назаров) тата тĕрлĕ кружоксен ĕçне лайăхлатма пысăк парне самаях пулăшĕ.

Уявра пирĕн ентешĕн О. Прокопьевăн «Шыв çинчи сар хĕвел çутипе» кĕнекин презентацийĕ те иртрĕ.